27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 СЕНТЯБРЬ 13 ЮНКУН 181(6676) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

# Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

## Тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçсене большевикла ертсе пымалла

Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхăн малтанхи пилĕк кунĕ хушшинче республикăри колхозсем тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçсен хăвăртлăхне чылаях ÿстерчĕç. Çав вăхăт хушшинче Çĕрпÿ, Калинино, Шупашкар, Красноармейски районĕсенчи колхозсем тырпул вырса пĕтерчĕç. Ку ĕçе паян-ыранах Вăрнар, Вăрмар, Чурачăк тата ытти районсем те вĕçлеççĕ. Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхăн малтанхи пилĕк кунĕнче республика колхозĕсем государствăна тырă памалли графика ирттерсе тултарчĕç, Вăрнарпа Шупашкар районĕсем вара пилĕк кунхи задание 1,5 хут ирттерсе пурнăçларĕç.

Анчах, пĕтĕмĕшле илсен, республика тырă вырса пĕтерĕмен-ха, кĕлте кÿрсе капана хывас тата авăн çапас ĕçсем тĕлĕшпе те кĕтнĕ ÿсĕм çитмен-ха. Çав ĕçсен хальхи пек хăвăртлăхĕпе тырпула каяс хăрушлăх пур.

Тырпул пухса кĕртмелли юлашки татăклă тапхăр çитрĕ. Кашни сехет, кашни минута хаклă. Халĕ ĕнтĕ тырă вырас ĕçе кăшт вăраха яни те çĕршер пин пăт тырă тăкăнса пĕтесси патне илсе пырать. Кĕлтесене малашне хирте икĕ-виçĕ куна та хăварма юрамасть, мĕншĕн тесен, пĕчĕк тĕмсемпе çĕмелсенчи тырпул часах шăтса каять. Авăн çапассине те тăсма çук, мĕншĕн тесен эпир итемсемпе капансенче те нумай тырпул çухатма пултаратпăр. Республикăри малта пыракан колхозсен ĕçĕ çавăн пек тăкаксенчен кирек мĕнле колхоз та хăтăлма пултарнине кăтартса парать. Халĕ район руководителĕсем, колхоз председателĕсем, коммунистсемпе комсомолецсем ялхуçалăх çулĕн çак татăклă тапхăрĕнче тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен ответлăхне туйса ĕçлени тата вĕсем ялти мĕнпур халăха уйхир ĕçĕсене вĕçленĕ çĕре мобилизацилени кирлĕ.

Тырă вырас ĕçе Кувакино, Улатăр, Комсомольски, Шăмăршă, Тăвай тата ытти хăшпĕр районсем тÿсме çук тăсса пыраççĕ. Çав районсенче сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсен мĕнпур лаптăкĕнчен 10 процентран пуçласа 20 процента çити вырман тырпул юлнă. Вăхăт кĕр енне сулăннă чухне çавăн пек темиçе пин гектара вырмасăр вырттарнине тÿсме пулать-и-ха ĕнтĕ? Партин çав районсенчи комитечĕсен секретарĕсем Новиков, Горбунов, Георгиев, Дубов тата Молоствов юлташсем тырпула тăккаланăшăн тăван çĕршывпа фронт умĕнче хăйсем мĕнле ответлă пулса тăнине туяççĕ-ши? Çав районсенче туртăм вăйĕ тĕлĕшпе, чăн та ĕнтĕ, йывăрлăхсем пур. Анчах тырпула вырса капана хывма лашасем ытлашши нумаях кирлĕ мар. Кунта пуринчен ытларах çынсем кирлĕ, çынсем вара çав районсенче ытти кирек мĕнле районринчен те сахал мар. Апла пулсан, ĕç пĕтĕмпех колхозниксемпе ялти мĕнпур çынсене тырă вырнă çĕре мобилизацилеме пĕлнинчен килет. Колхозниксене пулăшма кунта районсенчи тата ялти учрежденисенчи çĕршер çынна мобилизацилме май пулнă. Анчах асăннă районсенчи исполкомсен председателĕсем Ларионов, Поверенков, Падюков, Григорьев тата Шитов юлташсем хуласемпе ялсенчи çынсене тырпул пухса кĕртнĕ çĕре мобилизацилесси çинчен Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановление хакламасăр тăраççĕ. Çакă вăл государство дисциплинине пăсни пулнине çав юлташсем ăнланаççĕ-ши?

Чылай районсенче кĕлте турттарса капана хывас тата авăн çапас ĕçсене вырассипе çулассинчен питĕ кая хăварнă. Элĕк районĕнче, сăмахран, тырпула пурĕ 97 процент вырнă, капана вара 44 процент чухлĕ кăна хывнă, авăна 37,7 процент чухлĕ çапнă. Муркаш районĕнче пĕтĕмпе 98 процент вырнă, кĕлте турттарса капана хывассипе авăн çапассине вара 40—43 процент çеç пурнăçланă. Тăвай, Калинино, Сĕнтĕр, Елчĕк, Хĕрлĕ Чутай тата ытти хăшпĕр районсенче те ĕç çавăн пекех тăрать. Кĕлте турттарса капана хывас ĕç çавăн пек вăрахăн пыни чăн малтан çакăнтан килет: республика Совнаркомĕпе парти Обкомĕ кун пирки темиçе хутчен кăтартса панă пулин те, кĕлте кÿнĕ тата тырă турттарнă çĕре ĕнесемпе вăкăрсене пачах та çителĕксĕр явăçтарнă. Ялхуçалăх ĕçĕсенче ĕнесемпе тата вăкăрсемпе Сĕнтĕрвăрри, Октябрьски, Куславкка, Çĕрпÿ, Сĕнтĕр, Чурачăк, Красноармейски, Етĕрне, Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи колхозсенче уйрăмах япăх усă кураççĕ. Нумай колхозсен председателĕсемпе бригадирĕсем, коммунистсемпе комсомолецсем вăкăрсемпе ялхуçалăх ĕçĕнче усă курасси çинчен сăмахпа çеç калаçса лараççĕ, çак ĕçре хăйсем пример кăтартмаççĕ. Парти райкомĕсен секретарĕсемпе райисполкомсен председателĕсем вара çавăн пек фактсемпе килĕшсе пурăнаççĕ. Енесемпе тата вăкăрсемпе ялхуçалăх ĕçĕсене [illegible] çавăн пек кирексене пăхнине халех пĕтермелле. Кĕлте кÿнĕ тата тырă турттарнă çĕре колхозсемпе колхозниксен ĕнисене анлăн явăçтармалла [illegible] вара колхозсем пысăк йывăрлăха кĕрсе ÿкме пултараççĕ.

Тырпулсене хăвăртрах пухса кĕртес ĕçре партипе совет органĕсенчи [illegible] çĕр ĕçĕсен пайĕсен заведующийĕсем [illegible] Куславкка районĕн çĕр ĕç пайĕн заведующийĕ Григорьев юлташ, сăмахран, колхозсенче [illegible] çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе ним те тумасть, вĕсем çинчен ялан тенĕ пекех, парти райкомĕн секретарьне кăна «сигналсем» парса тăрать. Çитменлĕхсем пирки сигнал пама кирли çинчен каламалли те çук. Анчах ку ĕç, паллах, çитменлĕхе вырăнта, хăвăн аллупа тÿрлетессинчен çăмăлрах. Вăйлă тырпулшăн тата тырпулсене тăккаламасăр пухса кĕртессишĕн пыракан кĕрешĕве, пуринчен малтан, çĕрĕç пайĕн ертсе пырас пулать.

Чылай колхозсенче витнĕ итемсене ку таранччен те йĕркене кĕртмен, çĕрле авăн çапассине организацилемен. Лашапа çапмалли молотилкăсем пур çинченех, лашасем çителĕксĕр тесе, авăна алăпа çапаççĕ, çапла вара авăн çапса пуçтарса государствăна тырă парас ĕçе вăраха яраççĕ. Партипе правительство кирек мĕнле çанталăкра та талăкĕ-талăкĕпех авăн çапма, хатĕрлев пунккĕсене куллен тырă турттарса тăма, çапла вара, государство умĕнчи парăмсене хăвăртрах татса, хамăрăн тăван çĕршывăн вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи хăватне куллен ÿстерсе пыма чĕнеççĕ. Чăваш республикинчи колхозсем, сывăх вăхăтсенчех авăн çапса пĕтерсе, государствăна тырă памалли хăйсен обязательствисене срокчен тултарма пултараççĕ, вĕсен çапла тумалла та.

Тырпула тăккалассине вырнă çĕрте кăна мар, çапнă çĕрте те пĕтермелле. Авăн çапмалли машинăсене начар йĕркеленине пула, улăмпа пучаха нумай тырă каять, алăпа çапнă чухне те тырă кĕлтере сахал мар юлать. Ку çитменлĕхсем пулмалла мар. Тырпула шута илес тата хураллас ĕçе начар йĕркеленине пула, хатĕрлев пункчĕсене тата амбарсене турттарнă чух нумай тырă сапаланса пĕтет. Колхоз председателĕсемпе çĕрĕç пайĕсен заведующийĕсем кашни пĕрчĕшĕн тăван çĕршыв умĕнче ответлă пулса тăраççĕ.

Государствăна тырă турттарса памалли график — çирĕп закон. Ăна çине тăрса пурнăçа кĕртсе пымалла. Çав графика пăснине никам та, нимĕнле сăлтавпа та тÿрре кăларма пултараймасть. Анчах хăшпĕр колхозсенче, тĕрлĕ сăлтавсем çине тÿнтерсе, государствăна тырă парас ĕçе тăсса пыраççĕ.

Çакă вăл государство умĕнче айăпа кĕни пулать. Анчах партин Первомайски райкомĕн секретарĕ Долгов, райисполком председателĕ Васильков тата Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕ Корчагин юлташсем тырă турттарас ĕçе вăраха яракан колхоз председателĕсемпе килĕшсе лараççĕ. Çавна пула Первомайски район тырă памалли графика тăтăшах пурнăçламасăр пырать. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ государствăна тырă памалли пилĕккунлăх заданисене тăтăшах пурнăçа кĕртсе пыманшăн Долгов, Васильков, Корчагин юлташсене ятласа хăварчĕ тата, вĕсем çак ĕçе лайăхлатмасан, вĕсене хăйсен вырăнĕсенчен кăларса суда памалла тăвасси çинчен асăрхаттарчĕ.

Тырă памалли заданисене сентябрĕн иккĕмĕш пилĕккунлăхĕнче пурнăçа кĕртмен Пăрачкав, Кувакино, Çĕмĕрле, Комсомольски, Чкаловски, Куславкка тата Етĕрне районĕсен руководителĕсене те асăрхаттарса хăвармалла. Çав районсен, хăйсем кая юлнине сентябрĕн виççĕмĕш пилĕккунлăхĕнче пĕтерсе, малашнехи графика çирĕп пурнăçа кĕртсе пымалла.

Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем кăçалхи çул государствăна тырă памалли плана тултармалăх та, вăрлăх тата ытти обществăллă фондсем хывмалăх та, колхозниксен ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе памалăх та çителĕклĕ, вăйлă тырпул пăхса çитĕнтерчĕç. Мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсен, колхоз руководителĕсен, партипе совет тата çĕрĕç органĕсен задачи — çав тырпула хăвăртрах пухса кĕртесси тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли плансене вăхăтра тултарасси пулса тăрать.

Пĕтĕм халăхăн çакă питех те паха ĕçне ăнăçлăн пурнăçа кĕртме мĕнпур вăйсене мобилизацилер!

### ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариатĕнче

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕ предприятисен социализмлă ăмăртăвĕн августь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, [illegible] Володин тата Слуцкий юлташсем главнăй инженер пулса ĕçлекен заводсене иккĕмĕш преми памалла тунă.

---

Сентябрь 5 — **Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх** — Сентябрь 15

### 1944 ÇУЛХИ СЕНТЯБРЕН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ РЕСПУБЛИКАРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ТЫРПУЛСЕНЕ ВЫРСА ПУХАС ТАТА КĔРХИ ÇĔРТМЕ ТĂВАС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(Процентпа)

| РАЙОНСЕМ | Вырса пухнă | Капана хывнă | Çапнă | Кĕрхи çĕртме тунă |
|---|---|---|---|---|
| Калинино | 100,0 | 64,0 | 38,0 | 10,7 |
| Красноармейски | 100,0 | 62,1 | 34,7 | 9,1 |
| Çĕрпÿ | 100,0 | 61,1 | 48,0 | 12,4 |
| Шупашкар | 100,0 | 51,5 | 39,7 | 7,5 |
| Вăрнар | 99,8 | 56,7 | 37,6 | 11,2 |
| Канаш | 99,6 | 46,0 | 40,8 | 9,0 |
| Советски | 99,5 | 53,5 | 36,9 | 12,7 |
| Чурачăк | 99,5 | 51,1 | 40,6 | 8,0 |
| Сĕнтĕрвăрри | 99,3 | 62,5 | 44,0 | 14,7 |
| Етĕрне | 99,0 | 64,8 | 36,5 | 4,9 |
| Вăрмар | 98,5 | 68,8 | 47,6 | 7,8 |
| Сĕнтĕр | 98,5 | 51,1 | 40,2 | 12,8 |
| Муркаш | 98,1 | 43,4 | 40,7 | 8,5 |
| Элĕк | 97,7 | 44,2 | 37,6 | 11,2 |
| Ишлей | 96,4 | 46,7 | 38,1 | 2,7 |
| Куславкка | 96,2 | 59,7 | 40,7 | 11,6 |
| Шăхасан | 96,1 | 60,7 | 50,2 | 5,4 |
| Елчĕк | 95,9 | 55,7 | 32,1 | 7,9 |
| Чкаловски | 95,3 | 59,5 | 32,3 | 4,7 |
| Октябрьски | 94,8 | 62,1 | 37,1 | 10,5 |
| Первомайски | 93,4 | 51,2 | 41,8 | 0,9 |
| Йĕпреç | 91,6 | 50,9 | 41,6 | 2,9 |
| Тăвай | 90,2 | 49,9 | 35,1 | 2,7 |
| Хĕрлĕ Чутай | 89,9 | 57,2 | 37,0 | 1,2 |
| Çĕмĕрле | 86,6 | 67,9 | 46,9 | 1,4 |
| Комсомольски | 82,4 | 44,0 | 28,6 | 0,3 |
| Шăмăршă | 81,6 | 66,6 | 42,6 | 3,0 |
| Улатăр | 81,2 | 56,9 | 44,7 | 3,5 |
| Пăрачкав | 77,1 | 79,3 | 48,9 | — |
| Кувакино | 68,9 | 65,2 | 42,9 | — |

### Шупашкар, Калинино тата Çĕрпÿ районĕсем хыççăн Красноармейски район та тырă вырса пĕтерчĕ

Сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне Красноармейски районри колхозсем, 17.790 гектар çинчи тырра вырса, государство планне тултарнă. 12.589 гектар çинчен кĕлте турттарса капана хывнă. Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхăн малтанхи ултă кунĕнче пĕтĕм тырпул шутĕнчен пăрçа-ясмăк тата тулă çапса пĕтернĕ. «Ильич», «Жнейка», Степан Разин ячĕпе тăракан колхозсем — пурĕ 8 колхоз — обязательствăсем тăрăх государствăна тырă парса татнă. Халĕ кантăр татасси тата çĕрулми кăларасси пуçланчĕ. Районри колхозсенче кĕрхи çĕртме тăвасси хĕрÿллĕн пырать.

### *Электричествăпа авăн çапаççĕ*

КУСЛАВККА. Каганович ячĕпе тăракан колхоз иккĕмĕш çул ĕнтĕ электричество вăйĕпе авăн çапать. Кунта кăçал пĕр чăрмавсăр авăн çапмалла пултăр тесе, итем çине икĕ мотор вырнаçтарса лартнă. Электростанци Энĕш шыв вăйĕпе ĕçлет. Итемре халĕ çĕрле те ĕçлеме пулать. Электричество вăйĕпе тата сутипе усă курса, колхозниксем кунĕн-çĕрĕн авăн çапаççĕ.

М. ИЛЬИН.

### Колхозри кладовщица

ЕЛЧĔК. Çĕнĕ Пăвари «Сатурн» колхоз членĕ Пелагея Докторова кăçалхипе иккĕмĕш çул ĕнтĕ кладовщица пулса ĕçлет. Вăрçăччен пирĕн колхозра икĕ кладовщик пулнă. Халь Докторова икĕ çын ĕçне пĕчченех туса пырать. Ăна колхозниксемпе колхозницăсем юратаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем Докторовăн лайăх ĕçне кураççĕ.

Докторова кладовщица тырпулсене кĕлете лайăх тасатса кĕртет, колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх таса тырă парать. Вăл янă тырра государство валли те пĕр тиркемесĕр илеççĕ.

В. НАУМОВ.

### Воскресник кунĕнче хатĕрлев пункчĕсене 67.080 центнер тырă леçнĕ

ВЛКСМ Обкомĕ йышăннă тăрăх, иртнĕ вырсарникун, сентябрĕн 10-мĕшĕнче, республикăра государствăна тырă леçес тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксен воскресникĕ пулса иртрĕ. Воскреснике пурĕ 22.000 çамрăк хутшăннă. Вĕсем çав кун хатĕрлев пунктне 76.080 центнер тырă леçнĕ.

Воскресник кунĕнче уйрăмăнах çак районсем тырă нумай леçнĕ: Çĕрпÿ районĕ (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Федоров)—3.740 центнер, Елчĕк районĕ (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Павлов)—3.484 центнер, Красноармейски район (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Скворцов)—3.390 центнер леçнĕ.

Шăхасан районĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем çав кун нихăçанхинчен те ытларах тăрăшса ĕçленĕ. «Красная звезда» колхоз 50 лавран хĕрлĕ обоз организацилесе, 159 центнер леçнĕ, «Правда» колхоз—194 центнер, «Прогресс» колхоз 118 центнер леçнĕ.

Çавăн пекех Комсомольски, Сĕнтĕр, Вăрнар, Элĕк, Канаш районĕсенче те воскресник ăнăçлă иртнĕ.

Чылай районсенче çав кун вăкăрсемпе туллин усă курнă. Сăмахран, Вăрмар районĕнче 228 вăкăрпа, Комсомольски районра 218 вăкăрпа, Канаш районĕнче 205 вăкăрпа, Тăвай районĕнче 131 вăкăрпа тырă леçме кайнă.

Анчах та хăшпĕр ВЛКСМ райкомĕсем çак воскреснике тивĕçлипе организацилемен. Çавна пула ĕнтĕ Çĕмĕрле районĕ (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Васильева), Пăрачкав районĕ (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Бояркина), Первомайски район (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Николаева), Куславкка районĕ (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Иванов), Сĕнтĕрвăрри районĕ (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Егорова), Улатăр районĕ (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Киреева) çав кун государствăна тырă сахал леçнĕ.

Л. МИХАЙЛОВ,
ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ.

* * *

СОВЕТСКОЕ, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Ĕнер районра государствăна тырă парас тĕлĕшпе воскресник пулса иртрĕ. Воскресник вăхăтĕнче районри колхозсем 679 лавпа государствăна 202 тонна тырă леçсе пачĕç. Комсомолецсемпе çамрăксем уйрăмах активлăн ĕçлерĕç. Пĕтĕмпе 223 комсомолец тата союзра тăман 244 çамрăк воскресникe хутшăннă. «Сатурн» колхозри çамрăксем, комсомол организацин секретарĕ Данилов ертсе пынипе, 26 лавпа тырă леçнĕ. «Прогресс» колхоз 36 лавпа, «Страж революции» колхоз 20 лавпа тырă леçнĕ. Воскресник умĕнхи кунсенче çамрăксем авăн çапса хатĕрлерĕç.

ЯКОВ СИГАИ.

* * *

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Ĕнерхи кун районри колхозсем государствăна 1.364 центнер тырă леçнĕ. Мичурин ячĕпе тăракан колхоз 65 центнер, «Чăваш Коммуни» колхоз 132 центнер, Каганович ячĕпе тăракан колхоз 93 центнер леçнĕ.

### Фронт хушнă пек ĕçлетпĕр

ЭЛĔК. Сталин ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулсенче те районра малта пыракан колхозсенчен пĕри пулнă, кăçал та лайăх ĕçлет. Ку вăл пĕтĕмпех ĕçе тĕрĕс йĕркелесе план тăрăх туса пынинчен тата дисциплина çирĕп пулнинчен килет.

Тырă вырса пухма тытăннă вăхăтранпах пирĕн пĕрлешÿллĕ столовăй ĕçлет, колхозниксем кунне икĕ хут вĕри апат çиеççĕ. Ĕçкунĕ ирхине 3 сехетрен пуçланса каçхине 10 сехетре пĕтет. Колхозра стахановла ĕçлекенсен йышĕ те пысăк. Ф. Львова, С. Борисова, А. Михайлова, А. Сергеева т. ыт. колхозницăсем кунне 0,15—0,20 гектар тырă вырса пычĕç.

Тырпулсене вырса пухнă вăхăтрах авăн çапса государствăна тырă леçме, вăрлăх хатĕрлеме тытăнтăмăр. Кантăр пусине таттса сортласа, шыва хутрăмăр.

Паянхи куна çуртыррисене те вырса пуçтарса пĕтертĕмĕр.

Нормăна тултарса ĕçлекенсене хушса тÿлессине пурнăçа кĕртсе пыратпăр. Уйхир ĕç бригадирĕсем Петров, Тарасов юлташсем кашни кунах колхозниксем мĕн чухлĕ ĕçкунĕ тунине каласа кăтартаççĕ, çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерсе пыраççĕ.

Лайăх ĕçлекен колхозниксен паха ĕçне çутатса пыма тата çитменлĕхсене пĕтерме стена хаçачĕ лайăх пулăшса пычĕ. Каннă вăхăтра колхозниксене тĕрлĕ хаçатсем вуласа парассине организацилерĕмĕр.

Тырпулсене пухас хĕрÿллĕ ĕç пынă вăхăтра эпир колхоз канцелярине, клуба, хуралçăсем валли пÿрт çĕнĕрен туса лартрăмăр.

А. МЕШКОВ,
Сталин ячĕпе тăракан колхоз счетоводĕ.

### Пур ĕçе те ĕлкĕртсе пыраççĕ

ЕЛЧĔК. Тăрмăш ялсоветне 3 колхоз кĕрет. Тырпулсене пухса кĕртес ĕçре «Красное Знамя» колхоз мала тухрĕ. Колхозра уйрăм сдельщинăпа ĕçленĕ май социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пычĕ. Кунта ĕç нормине тултарман е сăлтавсăр ĕçе тухман çын çук.

Колхоз председателĕ П. Варламов юлташ тырпулсене пухса кĕртес ĕçе пур енчен те лайăх организацилерĕ, çавăнпа та кунта ĕç ытти колхозрисенчен ăнăçлăрах пырать. Тырă вырса пĕтернĕ, халĕ авăн çапаççĕ. Государствăна тырă парассине фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхра пурнăçлаççĕ.

Колхозра ĕçе вĕрентнĕ 7 вăкăр пур, вĕсемпе лашасемпе пĕр танах усă кураççĕ. Вĕсене ферма заведующийĕ Я. Данилов юлташ ĕçе вĕрентрĕ. Вăкăрсемпе кĕлте кÿреççĕ, государствăна пама тырă турттараççĕ.

Колхоз халĕ кĕрхи çĕртме тума тытăнчĕ. Килес çул çуртыррисем акмалли вырăна пĕтĕмпех сухаласа хăварасшăн. Ку тĕлĕшпе колхоз бригадирĕсем У. Кузнецовăпа М. Коновалова юлташсем ăмăртса ĕçлеççĕ.

П. ЩЕРБАКОВ,
ялсовет председателĕ.

### Ĕç дисциплинине пăсаççĕ

Ĕçре çирĕп дисциплина пулни, ĕçе пĕлсе организацилени тырпулсене пухса кĕртессине татса парать. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановлени тăрăх, тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра ĕçлеме пултаракан колхозниксене пурне те ĕçе хутшăнтармалла.

Апла пулин те, Потемкин ячĕпе тăракан колхозра (Красноармейски р-н) çав йĕркепе ĕçлемеççĕ. Акă, Е. Виноградова колхозница, тырă хĕрсе вырнă вăхăтра ĕçе пăрахса, 5 кун хушши кÿршĕри ялсене кайса çÿрерĕ. Колхоз председателĕ Максимов, çакăн çинчен пĕлет пулин те, нимĕнле мера та йышăнмасть. Максимовăн çемçелĕхне кура, ытти колхозниксем те ĕç дисциплинине пăсаççĕ. А. Филиппова, «эпĕ сыснасем пăхатăп» тесе, тырă вырма пачах хутшăнмасть, сыснисене вара пĕр пĕчĕк ача пăхса çÿрет. Ĕçе тухманнисем кашни кунах 3—4 çын пулаççĕ.

М. ДМИТРИЕВ.

### РЕСПУБЛИКĂРИ РАЙОНСЕН ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАРАС ТĔЛĔШПЕ ПЫРАКАН ĂМĂРТĂВĔ

(Сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне илнĕ сведенисем тăрăх)

| Районсем | Плана тултарнă (процентпа) |
|---|---|
| Вăрнар | 69,1 |
| Шупашкар | 65,8 |
| Çĕрпÿ | 59,9 |
| Сĕнтĕрвăрри | 58,6 |
| Муркаш | 56,8 |
| Ишлей | 55,9 |
| Шăхасан | 53,8 |
| Красноармейски | 52,9 |
| Сĕнтĕр | 51,0 |
| Советски | 50,6 |
| Чурачăк | 50,2 |
| Октябрьски | 49,3 |
| Калинино | 48,6 |
| Канаш | 45,7 |
| Вăрмар | 45,4 |
| Элĕк | 44,7 |
| Куславкка | 44,7 |
| Етĕрне | 40,8 |
| Йĕпреç | 36,1 |
| Хĕрлĕ Чутай | 33,9 |
| Улатăр | 32,6 |
| Тăвай | 32,5 |
| Çĕмĕрле | 31,8 |
| Елчĕк | 30,3 |
| Первомайски | 24,7 |
| Шăмăршă | 24,7 |
| Комсомольски | 23,0 |
| Чкаловски | 15,7 |
| Кувакино | 14,5 |
| Пăрачкав | 13,8 |

### „Крахмал“ колхозăн çитĕнĕвĕсем

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленине тĕплĕн сÿтсе-явни, ăна кашни колхознике ăнлантарса пани тата çак постановление пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пыни Шупашкар районĕнчи «Крахмал» колхоза кăçал тырпулсене вăхăтра та тăккаламасăр пухса кĕртме май пачĕ.

Колхоз ĕçре пур майсемпе те усă курать, машинăсене лайăх ĕçлеттерет, çавăнпа пĕрлех тырра алăпа та вырнă. Колхозăн вырса пуçтармалли тырпул пĕтĕмпе 252 гектар пулнă, вăл шутран 75 процентне машинăсемпе вырнă. Пур ĕçе те уйрăм сдельщинăпа организацилени ĕç тухăçлăхне нумай ÿстернĕ. Колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарнă.

Кĕлте турттарса капана хывнă хыççăн, сентябрĕн 12-мĕшĕ тĕлне мĕнпур тырпулран 96 процентне çапса пуçтарнă. Государствăна тырă памалли плана пур культурăсем енĕпе те 102 процент тултарнă, 1945 çулшăн 200 пăта яхăн тырă панă. Колхоз сĕт-çу, аш-какай, çăмарта, çăм обязательствисене те парса татнă. Сĕт 1945 çулшăн — 570 литр, унсăр пуçне çĕнтерÿ фондне 1000 литр панă.

Колхозра халĕ пикенсех кĕрхи çĕртме тăваççĕ. Кĕрхи çĕртме тумалли плана çурри ытла пурнăçланă та ĕнтĕ.

Колхоз пахча-çимĕçсене пуçтарса кĕртнĕ, ку енĕпе те государство умĕнчи парăма татнă.

Колхозра шкул пур, унта кăçал ачасене вĕри апат çитерме йышăннă. Шкулти столовăй валли колхоз халлĕхе 6 пăт çăнăх, 60 пăт çĕрулми, 60 пăт купăста, 1000 литр сĕт уйăрса панă.

Кирлĕ фондсене хывнă хыççăн, колхоз тырпулпа тупăша ĕçкунĕсем тăрăх валеçме шутлать.

— Колхозниксемпе колхозницăсем, фронтри çĕнтерÿсемпе хавхаланса, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç, — тет колхоз председателĕ Николаев юлташ, — пур тĕрлĕ парăмсене те парса татрăмăр, колхозри тĕрлĕ фондсене хывма та, колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх валеçме те тырпул çителĕклĕ.

П. КОЗЛОВ.

## Совет Информаци Бюровĕнчен

### СЕНТЯБРЕН 11-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНАЙ СВОДКА

**Сентябрĕн 11-мĕшĕнче ЛОМЖА хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, 30 ял ытла тытса илнĕ, вăл шутра—ПНЕВО, ПОДГУЖЕ, ГЕЛЧИН, КОНАЖИЦЕ (ЛОМЖА хулинчен 4 километр кăнтăртарахра), БОГУШИЦЕ, ХОЙНЫ-СМЕШНЕ, СУЛЬКИ, МЯСТКОВО, ЗАРУЗЕ, КУЛЕШКА ятлă пысăк ялсем.**

**Румынин вăтаçĕрти пайĕнче пирĕн çарсем, тăшмана хирĕç Румыни çарĕсемпе пĕрле çапăçса, малалла куçса пынă, СИГИШОАРА, МЕДИАШ, ПЕТРОШАНИ хулисене туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 500 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ВАРДЬЯШ, ХОМОРОД ОКЛАНД, ХОГИЗ, САС-НАДОШ, АДАМОШ ятлă пысăк ялсем тата НЕЕРУШ, АПАЦА, АУГУСТИНИ, ДАНОШ ятлă чугун çул станцийĕсем.**

**Халĕ паллă пулнă тăрăх, Болгари çĕрĕнче УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем нимĕçсен 13-мĕш танковăй дивизийĕн командирне ТРЕГЕР генерал-лейтенанта тата нимĕçсен 153-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирне БАЙЕР генерал-лейтенанта тыткăна илнĕ.**

**Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.**

**Сентябрĕн 10-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 12 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 7 самолетне персе ÿкернĕ.**

☆ ☆ ☆

Ломжа хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, малалла куçса пынă. Тăшман хăйĕн Ломжа хули çывăхĕнчи Нарев шывĕн сулахай хĕрринчи плацдармне вăйлă çирĕплетнĕ, ăна Хĕвелтухăç Пруссие пырса кĕмелли çулсене хÿтĕлекен вăйлă çирĕплетнĕ район туса хунă. Нимĕçсем çав плацдарм çине хăйсен пехотин, танкĕсен, хăй тĕллĕн çÿрекен тупписен пысăк вăйĕсене пухса тăратнă, хытă хирĕç тăрса çапăçаççĕ. Пĕр соединени боецĕсем, танксене тата пехотăна хирĕç туса тултарнă чăрмавсене çĕмĕре-çĕмĕре, нимĕçсене вĕсен оборонин темиçе узелĕнчен хĕссе кăларнă. Хойны-Смешне ялне тăшмантан тасатнă. Ку ял Ломжа хулинчен 8 километр хĕвеланăçнерехре ларать. Тăшман темиçе хутчен те контратакăна кĕре-кĕре кайнă, анчах та совет çарĕсем хĕссе пынипе, ирĕксĕрех каялла чакса пынă. Пĕр участокра кăна гитлеровецсене пĕр батальон ытла пĕтерсе тăкнă. Трофейсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Румынин вăтаçĕрти пайĕнче пирĕн Румыни çарĕсемпе пĕрле кĕрешекен çарсем 35 километр малалла кайнă та Медиаш хулипе Сигишоара хулине туртса илнĕ. Тăшман татти-сыппиcĕр резервсем илсе пырать те вĕсене çавăнтах çапăçăва кĕртсе ярать. Пирĕн çăмăллăн куçса çÿрекен чăсем тăшман тылне кĕре-кĕре каяççĕ те фронта килекен нимĕçсемпе венгерсен маршевăй батальонĕсене пĕтере-пĕтере тăкаççĕ. Власов офицер командир пулса ертсе пыракан артиллеристсем тăшман колоннине сасартăк пеме тытăннă та 400 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра совет танкисчĕсем тăшманăн çар эшелонĕсен каялла чакмалли çулĕсене татнă. Çав эшелонсене сыхлакан нимĕçсем тарса çăлăнса юлма хăтланнă, анчах та вĕсене пĕтерсе тăкнă, хăшне-пĕрне тыткăна илнĕ. Пирĕн танкистсем çар пурлăхĕ тиесе пыракан 5 эшелона тытса илнĕ тата 200 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Шауляй (Шавли) хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн разведка отрячĕсем кун каçа 180 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Пĕр чаçри разведка ушкăнĕ тăшман тылне кĕрсе кайнă та çул хĕрринче засада тунă. Часах çак разведчиксем хăйсем патне тăшман бронетранспортерĕ çывхарса пынине курнă. Совет боецĕсем нимĕçсен машинине çĕмĕрсе тăкнă та унăн 5 çынтан тăракан экипажне тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра гитлеровецсем совет çарĕсен позицийĕсем патнелле 5 танкетка-торпеда янă. Виçĕ танкетки минăсем çине пырса кĕрсе сирпĕнсе кайнă, ытти икĕ танкеткине танксене пемелли пăшалсемпе персе пĕтерсе тăкнă.

* * *

Каунас (Ковно) хулинчен хĕвеланăçнерехре Ефимов старшина ертсе пыракан боецсен ушкăнĕ çĕрле Шешупа шывĕ урлă каçнă та Хĕвелтухăç Прусси çĕрĕ çине кĕрсе кайнă. Разведчиксем автоматсемпе нимĕçсен отрядне пенĕ те 16 гитлеровеца вĕлерсе тăкнă. Кирлĕ хаклă сведенисем пухнă хыççăн пирĕн боецсем тĕрĕс-тĕкĕлех хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Янув хулинче (Польша), фашистла нимĕç ирсĕрĕсем Майданекра тунă усал ĕçсене хирĕç протестлесе, йышлă митинг пулса иртнĕ. Хула халăх совечĕн председателĕ Ковалинский çапла каланă: «Майданекри лагерьте тата ытти вырăнсенче те гитлеровецсем тунă пек тискер ĕçсемпе преступленисене этем историйĕ тек курман. Нимĕç палачĕсене эпир çакна каçарас çук. Польша халăхĕ Хĕрлĕ Çара пĕтĕм чун-чĕререн тав тăвать, мĕншĕн тесен Хĕрлĕ Çар темиçе çĕр пин поляка вилĕмрен çăлса хăварчĕ, халĕ те çăлса пырать».

Польша халăхĕ Хĕрлĕ Çар чаçĕсене пысăк пулăшу парать. Жемень ялçынни Сивак совет разведчикĕсене Вислок шывĕ урлă каçма каçă кăтартса панă, вăл хăй те боецсемпе пĕрле кайнă та нимĕçсемпе паттăррăн çапăçнă.

Пильн ялĕнчи çынсем нимĕçсем ишсе антарнă кĕпере юсаса лартнă, вара çав кĕперпе часах совет танкĕсем каçса кайнă. Мязунув ялĕнчи çынсем темиçе кĕпер хывнă. Çав кĕперсене хывнă чухнехи ĕçсене ертсе пынă Петр Швец çапла каланă: «Эпир, поляксем, Хĕрлĕ Çар умĕнче питĕ парăмлă, мĕншĕн тесен Хĕрлĕ Çар пире нумайĕшне нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларчĕ. Эпир хамăрăн пĕтĕм вăйпа тата мĕнпур майсемпе совет çарĕсене пирĕн пĕр тăшмана — Гитлер Германине татăклăн çапса çĕмĕрме пулăшма пулатпăр». Ланьцут хулинчи халăх унти госпитале майлаштарма пулăшать, Хĕрлĕ Çарăн аманнă салтакĕсене пысăк пулăшу парса тăрать.

## ОКТЯБРЬ УЯВĔ УМĔНХИ ĂМĂРТУ

### Сталин ячĕпе тăракан завод коллективĕ чĕнĕве ырласа

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, сентябрĕн 12-мĕшĕ (Телефонпа). «Большевик» заводра Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăрту сарăлса пырать. Рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем тата служащисем, Мускаври Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ завод коллективĕ чĕнĕвне хутшăнса, [illegible] илнĕ. Халĕ вăл обязательствăсене пурнăçласа пыраççĕ.

Завод коллективĕ иртнĕ вунă кун хушшинче плана чылай иртерсе пурнăçа кĕртнĕ. Вунă кун хушшинче 2,1 тонна çĕрулми тилĕнтерме пулсан, 2,6 тонна тилĕнтернĕ. Уйрăмах пĕрремĕш цехри Алексеева юлташ ертсе пыракан бригада лайăх ĕçлет. Вăл вунă кун хушшинче 350 килограмм çĕрулми тилĕнтерес вырăнне 490 килограмм тилĕнтернĕ. Пĕрремĕш иккĕмĕш цехри бригадăсем те хăйсен планĕсене иртерсе тултараççĕ.

[illegible] Кузнецов юлташ тăрăшса ĕçлет. [illegible]

Завод çĕрулми хатĕрлесе тăма ăна вăхăтра пулăшса пырать. [illegible]

(«Хамăр корр.»).

### Çĕнтерÿ хĕрсăпашĕнчи стахановла ĕçпе тултаттăр

Мускаври Сталин ячĕпе тăракан завод коллективĕ Октябрь уявĕ умĕн социализмла ăмăрту пуçарнă чĕнĕве Челноков юлташ ертсе пыракан завод рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем хутшăнчĕç. [illegible]

[illegible] 590.000 [illegible] 0,5 процент [illegible]

Заводри цехсенче бригадăсем илнĕ обязательствăсене пурнăçласа тултарма тăрăшаççĕ. [illegible]

### Комсомолецсемпе çамрăксен çамахĕ

Якунин юлташ главный инженер пулса ĕçлекен заводра рабочисем уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăннă. Ăмăртура çамрăксем [illegible] Черепанова юлташ [illegible] Весéнчен 5-мĕш [illegible] Рыдченкова юлташ [illegible] Çамрăксем тунă [illegible] ĕçре ытларах [illegible]

Комсомолецсемпе çамрăксен стахановла ĕçе пĕтĕм коллектива ăмăртăва хутшăнма чĕнет. Нумай рабочисем, çамрăксен примерĕпе ăмăртăва хутшăнса, кунран-кун çĕнĕ çитĕнÿсем тăваççĕ.

З. К.

### Вутă хатĕрленĕ çĕрте дисциплинăна çирĕплетмелле

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Кире вăрман хуçалăхĕнче чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрленĕ çĕрте чылай колхозниксем нормăна иртерсе тултараççĕ. Сăмахран, «Пионер» колхозри А. Реймова, Е. Выросова тата Буденный ячĕпе тăракан колхозри Р. Самаркина, М. Иванова, Е. Шурбина тата ыттисем те вутă касмалли плана кулленех 100—120 процент тултарса ĕçлеççĕ. Вăрман хуçалăхĕн дирекцийĕ вĕсене лайăх ĕçленĕшĕн темиçе хутчен те премисем панă.

Анчах та малта пыракан стахановкăсен ĕç опытне вăрманта ĕçлекен ытти колхозниксем хушшинче сарса пымаççĕ. Çавна пула кунта ĕç çине çиелтен пăхса, сÿрĕккĕн ĕçлекенсем те пур. Нумаях пулмасть «Çĕнтерÿ» колхозран 12 çын вутă касма пычĕç. Вĕсем унта пыриччен колхозран тухнăранпа виçĕ кун таçта çÿресе вăхăта иртернĕ. Ĕçлеме тытăнсан та вĕсем юлхавланса кăна ĕçлерĕç. Çапла вара çак 12 çын пĕр кунта 4 кубометр анчах вутă каснă. Ку вăл вĕсем ĕçлес шухăшкăмăлпа пурăнманнине пĕлтерет. Çак ушкăнри А. Юрмина, М. Черноглазова, Н. Андреева, М. Калькина тата ытти колхозниксем те тепĕр куннех ĕçрен пăрахса тарнă.

Чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлесси — оборонăллă ĕç. Çак ответлă ĕçрен пăрăнакансене тивĕçлĕ ответ тыттармалла.

И. ИШУТКИН.

## ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

# Халăх сывлăхне сыхлас ĕçре уйрăмах палăрнă работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Халăх сывлăхне сыхлас ĕçре ăнăçлă ĕçленĕшĕн тата çитĕнÿсем тунăшăн Чăваш республикинчи сывлăха сыхлас ĕçри уйрăмах палăрнă çак работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Хая Иосифовна Азимовăна — Шупашкар районĕнчи Кÿкеçри врач участокĕн заведующине, районри педиатра.
2. Фекла Афанасьевна Афанасьевăна — Советски районри Пакăшри трахома пункчĕнчи сестрана.
3. Софья Степановна Баглевăна—Çĕрпÿ райсовет исполкомĕн сывлăха сыхлас ĕç отделĕн заведующине.
4. Раиса Порфирьевна Бунцевăна — Пăрачкав районĕнчи Сиявăри врач пункчĕн фельдшерицине.
5. Никита Васильевич Васильева—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Банновăри фельдшерпа акушерка пункчĕн заведующине.
6. Лидия Петровна Виноградовăна — Сĕнтĕрвăрри больницинчи трахома сестрине.
7. Антонина Михайловна Волковăна — Пăрачкав районĕнчи Сиявăри врач участокĕн заведующине.
8. Григорий Аркадьевич Гутмана — Шупашкарти ача çуратмалли çуртăн главнăй врачне.
9. Василий Демидович Демидова—Шупашкар районĕнчи Шемшер участок больницин заведующине.
10. Василий Александрович Ермакова—Сĕнтĕр районĕнчи Ильинкăри фельдшер пункчĕн заведующине.
11. Мария Николаевна Ермишинăна — Çĕмĕрлери район больницин главнăй врачне.
12. Ольга Ефимовна Ефимовăна—Советски больницăри акушеркăна.
13. Агрипина Ефремовна Ефремовăна — Канаш районĕнчи Çĕнĕ Аччакассинчи ача çуратмалли çуртăн заведующине.
14. Марина Зиновьевна Зиновьевăна — Шупашкар райсовет исполкомĕн сывлăха сыхлас ĕç отделĕн ача амăшĕсемпе ачасен сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен инструкторне.
15. Мария Ивановна Ивановăна—Йĕпреçри ача çуратмалли çуртăн акушеркине.
16. Клавдия Ефремовна Исаевăна —Йĕпреç районĕнчи Кирери фельдшер пункчĕн медицина сестрине.
17. Таисия Ильинична Казначеевăна — Елчĕк районĕнчи Лаш Таяпари фельдшер пункчĕн заведующине.
18. Афанасий Петрович Камчаткина — Куславкка районĕнчи Карачри больницăн фельдшерне.
19. Матрена Михайловна Китаевăна — Шупашкарти поликлиникăн санитаркине.
20. Евдокия Сергеевна Комиссаровăна—Елчĕкри район больницин заведующине.
21. Елизавета Владимировна Лебедевăна —Елчĕк районĕнчи Элексей Тимешри трахома пункчĕн сестрине.
22. Анна Ивановна Луневăна — Ишлей районĕнчи Ишекри участок больницин заведующине.
23. Дарья Максимовна Максимовăна — Çĕрпÿри район больницин сестрине.
24. Иван Семенович Манориина—Улатăр районĕнчи Алтышевăри фельдшер пункчĕн заведующине.
25. Вера Алексеевна Мартьяновăна — Улатăр районĕнчи Ямско-Посадски фельдшер пункчĕн заведующине.
26. Валентина Николаевна Никитинăна—Пăрачкаври венерологи диспансерĕн хĕрарăм отделенийĕнчи акушерка-фельдшерицăна.
27. Лидия Афанасьевна Осановăна—Шупашкарти поликлиникăн участок врачне.
28. Петр Николаевич Осипова—Шупашкарти поликлиникăн главнăй врачне.
29. Антонина Петровна Петровăна—Шупашкарти 5-мĕш номерлĕ ача яслинчи сестра-воспитательницăна.
30. Василий Николаевич Петрова—Шăмăршă районĕнчи Патирекри фельдшер пункчĕн заведующине.
31. Васса Петровна Петровăна—Октябрьскинчи район больницин фельдшерицине.
32. Матильда Александровна Плетневăна—Атăл леш енчи ача çуратмалли çуртăн заведующине.
33. Анна Ивановна Рожковăна—Шăмăршă район больницин трахома сестрине.
34. Зинаида Николаевна Романовăна — Вăрмарти район амбулаторин фельдшерицине.
35. Раиса Максимовна Сафрона—Канашри санитарипе эпидемиологи станцин эпидемиологне.
36. Василий Симулич Симулина—Тăвай районĕнчи Элпуçĕнчи фельдшер пункчĕн заведующине.
37. Валентина Матвеевна Соловьевăна—Советски районри Шĕмшешри фельдшер пункчĕн заведующине.
38. София Фадеевна Фадеевăна—Шăхасан районĕнчи Энтриялĕнчи фельдшерпа акушерка пункчĕн акушеркине.
39. Варвара Алексеевна Федоровăна — Елчĕк районĕнчи Çирĕклĕ Шăхальти трахома пункчĕн медицина сестрине.
40. Çабира Назаровна Хаировăна—Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри сывлăх пункчĕн заведующине.
41. Григорий Петрович Шумолина — Сĕнтĕрвăрринчи район больницин фельдшерне.
42. Анна Георгиевна Яковлевăна—Шупашкарти ача больницин старши сестрине.
43. Евгения Яковлевна Юзеевăна—Шупашкар хулинчи 1-мĕш номерлĕ сĕт кухнинчи диетически сестрана.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи сентябрĕн 10-мĕшĕ.

*Редакцие килнĕ çыру*

### Пирĕн МТС-а пулăшу кирлĕ

Сĕнтĕр МТС-ĕ тырпулсене пухса кĕртес ĕçе çителĕксĕр хутшăнать. Кунта 18 сложнăй молотилка пур, паянхи куна 8 молотилка кăна ĕçлет, вĕсем те нормăна тултараймаççĕ. 10 комбайнран 9-шĕ кăна ĕçлеççĕ, вĕсем те пĕр комбайн чухлĕ те вырса пухаймаççĕ.

МТС-ра массăллă-ăнлантарулла ĕç çителĕксĕр пулса пырать, çавăн пирки ĕç дисциплини япăх. Нумаях пулмасть Фомин юлташ бригади МТС механикне Асталкин юлташа молотилкăна юсаса лартма чĕннĕ, анчах молотилка юсас вырăнне вĕсем эрех ĕçме тытăннă, трактористсем çав вăхăтра вĕсене кĕтсе ĕçлемесĕр ларнă.

Нумай пайсем çителĕксĕррине пула, МТС машинисене халĕ те юсаса пĕтермен. МТС-ра тума май çук пайсене МТС директорĕ Чупраков юлташ Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчен темиçе хут та ыйтнă. Анчах халиччен те нимĕнле пулăшу та çук. 9 молотилка валсăр ларaççĕ, вĕсене юсама тахçанах Канашри МТМ-а леçсе панă, вĕсем паянхи кунччен те унта юсавсăр выртаççĕ. Çакăн çинчен те Çĕрĕç Халăх Комиссариатне темиçе хут та пĕлтернĕ. Анчах Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ МТС-ри ĕçсемпе кирлĕ пек интересленмест.

П. ИСАЕВ.

### Колхоз шучĕпе пуйма тăрăшакансем

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен йышăннă постановленийĕнче государствăна панă тырă шутĕнчен 15 процент чухлĕ кăна колхозниксене аванс шучĕпе памалла тесе кăтартса панă.

Анчах та «Çĕньял» колхоз руководителĕсем çак постановление пăсас çул çине тăнă. Кунта государствăна 700 центнер парас вырăнне сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 134 центнер кăна панă.

Колхоз председателĕ Я. Матвеев тата бригадир Федоров государствăна панă шутран шутласан 124 процент чухлĕ тырă ведомость туса валеçнĕ. Колхозра закона пăсни çинчен ВКП(б) райкомĕн уполномоченнăйĕ Михайлов, райçĕрĕç пайĕн агрономĕ Алексеев та пĕлнĕ. Вĕсем, колхоз руководителĕсемпе пĕр шухăшлă пулса, çак ĕçе районри организацисенчен пытаркă. Вăл кăна мар, Михайловпа Алексеев юлташсем (вĕсем çак колхоз членĕсем) 600-шер килограмм тырă илнĕ. Çак кунсенче ВКП(б) райкомĕ «Çĕньял» колхозра государствăна тырă парас ĕç мĕнле пынине пăхса тухрĕ. Колхозра закони пăсса ĕçленĕшĕн колхоз председательне Матвеева суда пама, Федоровпа Михайлов коммунистсене парти ретĕнчен кăларма йышăнчĕ.

С. ШАДИН.

### ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂРА АМАННĂ ОФИЦЕРСЕН-ИНВАЛИДСЕН СОВЕЧĔСЕМ

Мускаври темиçе районра Отечественнăй вăрçăра аманнă офицерсен-инвалидсен совечĕсем тунă. Çав советсем инвалид пулнă офицерсене яланхи пурнăçра пулăшаççĕ, вĕсене ĕç тупса пама тата вĕсене сыватма тăрăшаççĕ, вĕсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçсене туса тăраççĕ. (ТАСС).

## УЧАСТОКСЕНЧИ ВРАЧСЕН РЕСПУБЛИКĂРИ СЪЕЗЧĔ ХУПĂНЧĔ

Участоксенчи врачсен республикăри съезчĕ сентябрĕн 12-мĕшĕнчи ларусенче наукăпа практикăллă докладсем итлерĕ. Докладсене П. Н. Осипов (Шупашкарти Поликлиникăн главнăй врачĕ), Г. А. Гутман (Шупашкарти ача çуратмалли çуртăн главнăй врачĕ), И. М. Кузнецов (Шупашкар больницин главнăй врачĕ), А. Ф. Фадеева (ача амăшĕсемпе ачасен сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен методцентрăн научнăй руководителĕ), Рябушкина (юн яракан станцин начальникĕ), Обухов тата ытти юлташсем туса пачĕç.

Съезд хупăнас умĕн ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков тата РСФСР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕн заместителĕ Мананникова юлташсем сăмах тухса каларĕç. Вĕсем хăйсен сăмахĕнче Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче медицина работникĕсем умĕнче халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе тăракан задачăсем çинчен тĕплĕн чарăнса тăрса, çав задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлеме чĕнчĕç.

Съездра халăх сывлăхне сыхлас ĕçре лайăх ĕçленĕшĕн тата çитĕнÿсем тунăшăн наградăланисене «Отличник здравоохранения» значокĕсене тата Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене пачĕç.

Съезд халăх сывлăхне çыхлас, халăха медицина пулăшăвĕ парас ĕçсене лайăхлатас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене палăртса хăварчĕ.

*Районри хаçатсенчен*

### Шкул ачисемпе учительсен ĕçкунĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Шăхальри çичĕ çул вĕренмелли шкулта вĕренекен ачасем каникул пуçланнăранпах «Восход», «Совет» тата «Çĕнтерÿ» колхозсенче активлăн ĕçленĕ. 143 вĕренекен 3.974 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ. Çавăн пекех çак шкулти учительсем те колхозра ĕçлесе 350 ĕçкунне яхăн тунă.

(«Коммунар»).

### Ачасем колхоза пулăшаççĕ

Пăрачкаври ачасен çуртĕнче пурăнакан тăлăх ачасем «Передовик» колхоза пучахсем пухас тĕлĕшпе пысăк пулăшу параççĕ. 97 ача хире тухса пĕр кун хушшинче 200 килограмм пучах пухнă. Çав пучахсене çапнă хыççăн 135 килограмм таса тĕштырă тухнă.

Кунсăр пуçне, ачасем колхоза 20 гектар çинчи йĕтĕне татса панă.

(«За большевистские темпы»)

### Ĕçре вăкăрсемпе усă кураççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Шупашкар Есмĕлти «Волга» колхозра тырпулсене пухса кĕртес ĕçре вăкăрсемпе анлăн усă кураççĕ. Вăкăрсене ĕçе вĕрентни колхозри туртăм вăйне перекетлеме май парать. Халĕ колхоз уйхирĕнче тăтăшах 7 вăкăр ĕçлет. А. Ишутов, В. Рябин, Н. Аванский çамрăксем вăкăрсемпе кĕлте турттараççĕ. Çапла турттарсах вĕсем 51 гектар çинчи тырра капана хывнă. Ватă колхозник Ларион Шикин кашни кунах вăкăрпа государствăна тырă леçсе парать.

(«Хĕрлĕ Октябрь»).

### Вăкăрсемпе ĕçлекен звено

ЕЛЧĔК. Хĕрлĕ Çырти «Красное знамя» колхозра кĕлтесене капана хывнă çĕрте вăкăрсемпе ĕçлеме уйрăм звено тунă. Çав звенора пурĕ 8 вăкăр. Вĕсемпе куллен 18—20-шер лав кĕлте турттараççĕ. Çапла вара звено çак вăкăрсемпе кунсерен 150—160 лав кĕлте турттарать.

(«Колхоз ялавĕ»).

### Государствăна пахча-çимĕçсем параççĕ

ЙЕПРЕÇ. «Оборона» колхоз кăçал 2.58 гектар çине хăяр, купăста, кишĕр, сухан, кăшман, помидор лартса çитĕнтернĕ. Анса пулнă пахча-çимĕçсене халь государствăна параççĕ. Хăяр, кишĕр, кăшман памалли плана тултарнă та ĕнтĕ, 2,90 центнер сухан панă.

(«Колхоз пурнăçĕ»).

### „ÇĔНТЕРÿШĔН" СТЕНА ХАÇАЧĔ

КАЛИНИНО. (Телефонпа). Çĕньял Явăшри «Çĕньял» колхозра «Çĕнтерÿшĕн» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать. Кăçал пурĕ 23 номер тухнă. Уйрăмăнах çураки вăхăтĕнче час-часах кăларнă, халĕ тырпулсене пухса кĕнĕ вăхăтра та 3—5 кунта пĕрре тухса тăрать.

Хаçат хăйĕн страницисенче колхозри ĕçсене чыслăн пурнăçласа пырас ыйтусене тĕплĕн çутатса тăрать. Колхозниксем хушшинче вăл коллективлă пропагандист, агитатор тата организатор пулса тăрать. Ĕçри опыта анлăн сарса, ыттисене ĕçлеме вĕрентет. Акă, сăмахран, 13 çулхи Мария Семенова, 70 çула çывхарнă Мария Пухова тата А. Ефимова, М. Майкова колхозницăсем тырпулсене пухса кĕрес ĕçсенче кунсерен нормăна 125—150 процент тултарса пынă. Хаçат çак стахановкăсен ĕç опычĕ çинчен лайăх çутатса панă. Çавăнпа пĕрлех кахалсемпе кĕрешет. П. Васильев, С. Павлова колхозниксене ĕçрен пăрăннăшăн критикленĕ. Уйхирте хĕрÿ ĕç пынă вăхăтра А. Сергеева колхозница ĕççĕн кахалланса çÿренĕ. П. Макаровпа М. Коротков колхозниксем ака тунă çĕртен ир таврăннă. Вĕсем çинчен стена хаçачĕ карикатура ÿкернĕ. Кун хыççăн колхозра ĕç дисциплини чылай çирĕпленнĕ.

Çавăн пекех стена хаçачĕ социализмлă ăмăртăва тĕрĕс йĕркелеме пулăшать. Бригадăсемпе звеносем хушшинчи ăмăртăва çутатас тĕлĕшпе хаçатра сводка парса тăраççĕ, «Хисеп хăми» тунă.

Стена хаçачĕ колхозниксене политикăллă воспитани парас енĕпе те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Хаçат фронтран килекен хыпарсене, совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсемпе тĕнчери лару-тăру çинчен кĕскен çырать. Колхозниксене партипе правительство йышăннă постановленисене пурнăçлама мобилизацилет.

Калас пулать, хаçатăн çитменлĕхсем те пур. Сăмахран, вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйтупа сахал çырнă, хаçата çырса тăракансен йышĕ пĕчĕккĕ.

В. ЗАЙЦЕВ.

## Сталин юлташ çинчен Алжир хаçатĕнче çырнă статья

АЛЖИР, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). «Журналь де демокрааси» хаçат Поль Блан çырнă «Сталинăн аслăлăхĕ мĕнре» ятлă статьине пичетлесе кăларнă.

«Пĕтĕм тĕнче, — тесе çырать статья авторĕ, — Хĕрлĕ Çара курса савăнать. Вăл паттăррăн кĕрешни Германин вăрçă машинине малтан хавшатрĕ, унтан вара çапса аркатрĕ. Мускавпа Сталинградсăр, Орелпа Харьковсăр Монтгомери çĕнтерÿсем тăвасси, çурçĕр Африкăна ирĕке кăларасси, Италие йышăнса илесси, Нормандипе кăнтăр Франције çарсем антарасси, Парижпа Марсель хулисене ирĕке кăларасси пулман пулĕччĕ».

Анчах та çав çитĕнÿсене тума мĕнле хатĕрленнĕ тата вĕсене мĕнле тунă-ха?—тесе ыйтать Блан. Çак ыйту çине вăл тĕплĕн ответ парать:

«Çав тĕлĕнмелле «чудăна» Совет Союзĕнчи халăхсем хĕрÿллĕ ĕçре пурнăçа кĕртрĕç, анчах, пуринчен малтан, совет çĕршывне иккĕ тĕлĕнмелле çын ертсе пынипе çав çĕнтерÿсене тума май килнĕ. Çав иккĕ çын, хăйсен çĕршывĕн ресурсĕсене нумай çулсем хушши пĕтĕçтерсе пырса, халăх массисен ĕçри мĕнпур хăватне, халиччен усă курман çав тери пысăк ресурссене чăн-чăн пуянлăх тунă çĕре ячĕç. Çав пуянлăхсен пĕр пайĕ — халăх нушисене тивĕçтернĕ çĕре, тепĕр пайĕ вара — совет халăхĕсен туслăхне хÿтĕленĕ çĕре кайса тăнă. Çав тери аслă ĕçсен çак планне шухăшласа палăртса хуни тата ăна пурнăçа кĕртни, ман шухăшпа, чăн малтан Ленинпа Сталинăн ĕçĕпе хăйсен çĕршывĕнчи çынсене кăна мар, çавăн пекех пĕтĕм этемлĕхе те тĕлĕнсе савăнма май параççĕ. Сталин кивĕ Российăри уйрăмшар пурăнакан нумай тĕрлĕ халăхсен вăйĕсене пĕтĕçтерме пултарни, вăл çав халăхсене пĕтĕмĕшпех ялхуçалăхлă тата пачах та тенĕ пек хут пĕлмен çĕршывран тĕнчери чи пуян индустриллĕ тата культурăллă çĕршыв туса хума май панă çул çине илсе тухни Сталинăн çирĕп вăй-хăватне, вăл малашнехине витĕр курса тăма пултарнине, вăл хăй суйласа илнĕ çула пĕр пăркаланмасăр çирĕп тытса пыма пултарнине кăтартса парать».

«Сталин, — тесе çырать малалла Блан, — ют çĕршыв çыннисен куçĕ умĕнче хăйĕн вăрçăри çитĕнĕвĕсемпе чапа тухрĕ. Граждăнла халăхăн çулпуçĕ совет çарĕсен Главнокомандующийĕ пулса тăчĕ».

«Анчах обществăллă пурнăçăн тата тепĕр енĕ пур, унта вара Сталин шухăшкăмăл тĕлĕшĕнчен халиччен нимĕнле полководец та, уйрăмăн илсен Юлий Цезарь та, çитмен пусăма ÿссе çитнĕ. Сăмах кунта Сталин тулашри политикăра хăйне питĕ пĕлсе тыткалани çинчен пырать. Нимĕçсемпе вĕсен тарçисем этемлĕх халиччен курман пек тискер хăтланнă пулин те, Финлянди правительствине сĕннĕ перемири условийĕсем тата Румыни парăнпă чухне ун умне тăратнă условисем çав тери вăхăтлă та виçеллĕ условисем пулса тăраççĕ».

## Черчилль Рузвельтпа канашлассн

ОТТАВА, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Енер Канадăна Великобритани премьер-министрĕ Черчилль çитнĕ. Унпа пĕрле çаксем килнĕ: вăрçă вăхăтĕнчи транспорт министрĕ лорд Лезеро, наука ыйтăвĕсемпе канаш паракан лорд Черуэли тата армипе флот руководителĕсем.

Официально тата çапла пĕлтернĕ: Вашингтонран Квебек хулине штабсен начальникĕсен Вашингтонри пĕрлешÿллĕ совечĕн Англи представителĕ Чарльз Дилл фельдмаршал тата Англин США-ри армийĕпе флочĕн ытти представителĕсем те пынă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Черчилль Квебек хулине пынă. Унта вăл Пĕрлешÿллĕ Штатсен паян пырса çитнĕ президенчĕпе Рузвельтпа канашлать.

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Квебекран пĕлтернĕ тăрăх, Рузвельт секретарĕ Эрли журналистсене çапла каланă: Рузвельтпа Черчилль канашлура пуринчен ытла вăрçă ыйтăвĕсем çинчен калаçаççĕ. Рузвельт инспекци йĕркипе Пирл-Харбора тата Алеут утравĕсем çине кайса килни тата вăл Нилиц адмиралпа, Макартур генералпа канашласа иртерни — «хальхи конференцие хатĕрленмелли питĕ кирлĕ ĕç пулнă», — тенĕ Эрли.

# Союзниксен Хĕвеланăç Европăри наступленийĕ

### Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ сентябрĕн 11-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Мозель шывĕ патнелле куçса пыракан чаçсем Люксембург хулине ирĕке кăларнă. Союзниксен çарĕсем Нешато хулине тата Ливерден хулин çурçĕр пайне кĕрсе кайнă. Альберт каналĕ хĕрринчи укрепленисен районĕнче нимĕçсем хаяррăн хирĕç тăраççĕ. Гент хулинче тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та союзниксен çарĕсем çав хулана тытса илнĕ. Остенде хулине тăшмантан тасатнă. Остенде хулипе Верн хули хушшинчи пĕтĕм çыран союзниксен аллинче.

Бретаньре Брест хули тулашĕнчи урамсенче çапăçаççĕ. Тăшман Брестран кăнтăртарахри Крозон çурутравĕнче çаплах хирĕç тăрать-ха.

Сентябрĕн 10-мĕшĕнче Англи карапĕсем, çĕр çинчи çарсене пулăшса пырса, Гавр таврашĕнчи оборона укрепленийĕсене вăйлăн пенĕ.

Союзниксен авиацийĕ нимĕçсен Гаврти çирĕплетнĕ позицийĕсене йышлăн вĕçсе кайса тапăннă. Ытти соединенисем тăшман аэродромĕсене, çулйĕрĕсене тата транспортне пыра-пыра тапăннă.

### Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, сентябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ сентябрĕн 10-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Италире, Адриатика секторĕнче, çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. 8-мĕш арми чаçĕсем туллă-сăртлă вырăнта çĕнĕрен малалла куçнă.

Арно шывĕн тури тăрăхĕпе Тибр шывĕн улăхĕ хушшинчи туллă-сăртлă вырăнта 8-мĕш армири Инди чаçĕсем ку таранччен тăшман аллинче тăнă темиçе паха çÿллĕ вырăна тытса илнĕ. Флоренци хулинчен çурçĕртерехре нумай малалла куçнă, темиçе паха çÿллĕ вырăна туртса илнĕ.

Франције тăшман хаяррăн хирĕç тăратъ пулин те, 7-мĕш арми каллех нумай малалла куçнă. Ку арми çурçĕрелле Дижон хули еннелле тата çурçĕр-хĕвелтухăçнелле Ду шывĕн улăхĕпе тăвалла куçса пырать. Ду шывĕ тăрăх тăвалла Германи чикки еннелле куçса пырса, Америка çарĕсем Бон-ле-Дам ялĕпе Клерваль ялне тăшмантан тасатнă. Французсен чаçĕсем Пон-де-Руад хулипе Сент-Иполит хули патне çитнĕ. Бриансон хулине çĕнĕрен тăшман çарĕсенчен тасатнă.

Кăнтăр Франције кампани пуçланнăранпа 70.000 çынна тыткăна илнĕ.

* *

ЛОНДОН, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Франције 7-мĕш арми чаçĕсем 100 миля сарлакĕш фронтра малалла куçнă та Хĕвелтухăç Франције тăшман каялла чакма пултаракан коридора тата ытларах ансăрлатнă. Француз çарĕсен малти отрячĕсем Дижон хули тулашне çитнĕ тата Селье хули патне пырса тухнă. Бельфортан кăнтăртарахра Ду шывĕпе Швейцари чикки хушшинче кĕрешекен француз чаçĕсене тăшман вăйлă хирĕç тăнă.

Италире, Флоренци хулинчен çурçĕртерехре, 5-мĕш армири Америка çарĕсем пысăк ăнăçу тунă, вĕсем Прато хулипе Пистойя хулине тытса илнĕ. Лукка хулинчен çурçĕртерехре американецсен патрулĕсем «Гот линийĕн» малти позицийĕсенче тăракан тăшман çарĕсемпе çапăçма тытăннă.

8-мĕш армири Англипе Инди чаçĕсем Адриатика секторĕн сулахай флангĕнче малалла куçса пыраççĕ, тăшман вăйлăн хирĕç тăрать.

### Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Дуисбург хулинчен темиçе миля кăнтăр-хĕвеланăçнерехре ларакан Мюнхен-Гладбах хулине çав тери хаяррăн та йышлăн тапăннă. Вăйлă пушарсем тухнă. Çавăн пекех тата Брауншвейг хули çине те бомбăсем пăрахнă.

Американецсен 1.100 самолечĕ ытла сентябрĕн 10-мĕшĕнче кăнтăрла Германие тапăннă. Штутгарт, Нюрнберг тата Ульм хулисен районĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Авиаци, танк тата автомобиль завочĕсене пуринчен те вăйлăрах атакăланă.

### Халăхăн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсене Тито маршал панă приказ

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Слободна Югославия» ятлă радиостанци пĕлтернĕ тăрăх, Тито маршал Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарне приказ панă. Çав приказра çапла каланă: «Калама çук савăнăçлă кун çитрĕ, çав куна эсир тата вилсе выртнă темиçе пин герой çав тери асапланса виçĕ çул çурă хушши кĕтсе тăнă. Сентябрĕн 6-мĕшĕнче пирĕн аслă союзник —чаплă Хĕрлĕ Çар Югослави чиккине тухрĕ».

Приказра малалла çапла каланă: нимĕçсен «Пĕтĕм Балкан çурутравĕнчен Югослави территорине пухнă дивизийĕсем пирĕн çĕршывран тухса кайма хăтланаççĕ, вĕсем çапла хăйсене айăпласси́нчен хăтăлса юласшăн. Тăшман çарĕсене пĕр шеллемесĕр пыра-пыра çапăр. Тăшман çыннисене вĕлерсе пырăр... Пирĕн çĕр çинче фашистсен шăммисем мĕн чухлĕ ытларах выртса юлĕç, фашистла захватчиксем пире калама çук асаплантарнăшăн эпир вĕсене çавăн чухлĕ лайăхрах тавăрăпăр. Çулйĕрсене пăсăр, тăшмана пирĕн халăхсен пурлăхĕсене тата çар техникине Югославирен илсе кайма ан парăр, тăшман пирĕн çĕршыва çав çар техникипе чураластарнă.

Аманнă фашистла тискер кайăк хăйĕн çулĕ çинче мĕн тĕл пулнине пурне те пĕтерсе пырать, пирĕн ачасене, хĕрарăмсене, стариксене вĕлерет; вăл хăйĕн пурнăçне тата темиçе сехетлĕхе тăсас тесе, çитĕннĕ арçынсене Германие илсе кайма тăрăшать. Пирĕн Югослави халăхĕсем умĕнчи таса тивĕç — çав çынсене тата вĕсен пурлăхне çăлса хăварасси, темиçе миллион çынна пĕтерсе тăкнăшăн тавăрасси пулать.

Паттăр Хĕрлĕ Çар хĕвелтухăçĕнче, ытти союзниксем — кăнтăрта тата хĕвеланăçĕнче фашистла йыткĕтĕвĕсене Германи еннелле хăваласа пыраççĕ. Пирĕн хамăрăн аслă союзник умĕнчи тивĕç — çак тататкăллă çапăçусенче этем курайман нимĕç захватчикĕсене пĕтĕмпех пĕтерсе лартма, чуралантарнă халăхсен асапĕсене часрах чарса лартма мĕн тума май пуррине пурне те тăвасси пулса тăрать».

Юлашкинчен приказра çапла каланă: чаплă Хĕрлĕ Çар пирĕн чикĕ çине тухни сире çĕнĕрен хавхалантартăр, Германи оккупанчĕсене тата тăван çĕршыва сутакансене тата вăйлăрах пыра-пыра çапма вăй патăр. Çак юлашки çапăçусенче те кирлĕ пек çапăçса, эсир никам çĕнтереймен Хĕрлĕ Çарăн тивĕçлĕ союзникĕсем пулса тăнине кăтартса парăр».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

## Çамрăксене ремесло училищисемпе чугун çул училищисене тата ФЗО шкулĕсене вĕренме илесси

Сентябрĕн 15-мĕшĕнче хуласемпе ялсенчи çамрăксене ремесло училищисемпе чугун çул училищисене тата ФЗО шкулĕсене вĕренме илеççĕ (мобилизацилеççĕ). Мĕн пурĕ 350.000 çын илмелле, çав шутран ФЗО шкулĕсене — 280.000 çын, ремесло училищисемпе чугун çул училищисене — 70.000 çын. Ĕç резервĕсем хатĕрлекен çав шкулсемпе училищĕсем çине ответлă задача хунă, — вĕсен çар промышленноçĕ валли, чугун çул транспорчĕпе строительство валли тата нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи халăх хуçалăхне юсаса ура çине тăратма кĕске вăхăт хушшинчех квалификациллĕ рабочисен çĕнĕ отрядне вĕрентсе хатĕрлемелле.

ФЗО шкулĕсене 15—17 çула çитнĕ арçынсене тата 16—18 çула çитнĕ хĕрсене илеççĕ, ремесло училищисемпе чугун çул училищисене — 14—15 çула çитнĕ арçынсене тата 15—16 çула çитнĕ хĕрсене илеççĕ.

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Ĕç резервĕсен главнăй управленийĕн начальникĕ Москатов юлташ хăйĕн приказĕнче кăтартса панă тăрăх, çамрăксене вĕренме илес ĕçре СССР Совнаркомĕ кăтартса панă йĕркене çирĕп тытса пырасси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла: çамрăксене кăтартнă сроксенче пухмалла; вĕсене шкулсемпе училищĕсене вăхăтра илсе çитермелле; вĕренме яракан кашни çамрăка чугун çулсемпе тата шыв çулĕсемпе укçа тÿлемесĕр каймалли путевкăпа литер памалла, вĕсене тумтир, атă-пушмак тата çул çинче çимелĕх апат-çимĕç памалла тата ытти те.

Хуласенчи, облаçсенчи, крайсенчи, республикăсенчи ĕç резервĕсен управленийĕсен начальникĕсене, ФЗО шкулĕсен тата ремесло училищисемпе чугун çул училищисен директорĕсене, облаçсенчи (крайсенчи) Советсен исполкомĕсемпе, союзлă тата автономиллĕ республикăсен Совнаркомĕсемпе тата профсоюзсемпе, комсомол организацийĕсемпе пĕрле, Отечественнăй вăрçă условийĕсенче государство валли ĕç резервĕсем хатĕрлесси мĕн тери паха ĕç пулса тăнине хуласемпе ялсенче анлăн ăнлантарса пама хушнă.

Ĕç резервĕсен вырăнти управленийĕсен предприятисене çĕнĕрен уçакан училищĕсемпе шкулсем валли общежитисем, ĕç вырăнĕсем тата ĕçлесе вĕренмелли çуртсем хатĕрлесе хуртармалла, ĕлĕкрех уçнă училищĕсемпе ФЗО шкулĕсене вĕренме пуçличчен юсаттармалла.

ФЗО шкулĕсенче массăллă профессисемпе ĕçлекен рабочисене вĕрентсе хатĕрлесси тата ремесло училищисемпе чугун çул училищисенче квалификациллĕ рабочисене вĕрентсе хатĕрлесси — Отечественнăй вăрçă условийĕсенче вăрçăпа хуçалăх енчен уйрăмах кирлĕ, уйрăмах паха ĕç пулса тăнине палăртса, СССР Совнаркомĕ Ĕç резервĕсен главнăй управленине, СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Ĕç вăйĕсене шута илсе валеçсе тăракан комитета, ĕççынни депутачĕсен облаçсенчи (крайсенчи) Совечĕсен исполкомĕсене тата союзлă республикăсемпе автономиллĕ республикăсен Совнаркомĕсене çапла тума хушнă: çамрăксене ФЗО шкулĕсене тата ремесло училищисемпе чугун çул училищисене организованно пухмалла (мобилизацилемелле), çамрăксене производствăна вĕрентес ĕçе тата вĕренекенсене культурăпа йăла енчен пулăшса пырас ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе шкулсемпе училищĕсене пур майпа та пулăшмалла.

(ТАСС).

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00687 Типография № 1. Управлени полиграфпро мышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.